**Спорт**

# Район пуçлăхĕн кубокĕ – чи вăйлисенче

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Ял тăрăхĕсен тата район администрацийĕн пайĕсен командисем те кăçал старта пĕрремĕш хут кăна тухмарĕç-ха. Çурăм хыçĕнче пĕрин хыççăн тепри шучĕ те икĕ теçеткерен иртрĕ. Çавăнпах вĕсене сăнама та интереслĕ пулчĕ. Вĕсен хушшинче «Единая Россия» команди пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Е. Григорьев финиша парти ялавне






иртнĕ тĕрлĕ ăмăртусем сахал мар кăçал. Çавăнпа та район пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илес тесе вĕсем тŷрех хăвăрттăн ыткăнчĕç малалла. Тăвата тапхăр хыççăн мала Ярапайкасси ял тăрăхĕн команди тухрĕ. Иккĕмĕш вырăна районти шалти ĕçсен пайĕн спортсменĕсем çĕнсе илчĕç. Виççĕмĕшсем – Муркаш ял тăрăхĕ.

Ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учрежденисен командисен вĕлкĕштерсе çитрĕ. «Оринино» хуçалăх – 2-мĕш, «Ударник» хуçалăх 3-мĕш вырăн çĕнсе илчĕç.

35 ертŷçĕ VIP-чупăва хутшăнчĕ. Арçынсем хушшинче В. Михайлов предприниматель, Шетмĕпуç ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Александров тата шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлекен В. Леонтьев малти вырăнсене тухрĕç. Хĕрарăмсем хушшинче пьедестал çине çаксем хăпарма пултарчĕç: 1-мĕш вырăн – Т. Мясникова (Очăкасси шкулĕнчи завуч), 2-мĕш вырăн – О. Рылина (Сосновка шкулĕнчи завуч), 3-мĕш вырăн – И. Осипова (Калайкасси шкулĕ).

Мала тухнисем тĕслĕ телевизорсемпе кубоксене, дипломсене тивĕçрĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене çĕнсе илнисене грамотăсемпе тата хаклă парнесемпе чысларĕç. Спонсорсем те ятарлă хушма парнесем хатĕрленипе ăмăртакансене савăнтарчĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ŷкерчĕксенче: трасса çинчи хĕрŷ кĕрешŷ; çак парнесемшĕн ăмăртрĕç йĕлтĕрçĕсем.**

**Автор сăн ŷкерчĕкĕсем.**

**Йыхрав**

# Елена ОСМАНОВА юрлать



***Мартăн 20-мĕшĕнче районти Культура çуртĕнче Елена Османован «Шупашкарăм, тăван Шупашкарăм» концерчĕ пулать. Программăра юрăçăн пурте пĕлекен тата çĕнĕ юррисем. Концерта ытти паллă юрăçсем те хутшăнаççĕ.***

***Концерт 18 сехет те 30 минутра пуçланать.***

***Билет хакĕ 100 тенкĕ.***

**Культура хыпарĕсем**

# «Эпир юрламасан, камсем юрлĕç?»

Иртнĕ кунсенче Çурлатри Культура çуртĕнче Мăн Токшикри Культура çурчĕ çумĕнчи халăх ятне тивĕçнĕ «Тăванлăх» фольклор ушкăнĕ хăйĕн юрри-ташшипе савăнтарчĕ. Лăк тулли клубра халăх кашни номере тăвăллăн алă çупса коллектива хавхалантарчĕ. Уйрăмах тури чăвашсен – Мăн Токшик ялĕнче, кŷршĕллĕ Етĕрне районĕнче, Турайра, Ярапайкассинче, Муркашра пурăнакансен юррисене килĕштерчĕç.

Ушкăнăн шăнăрĕ – мăшăрсен ансамблĕсем пурри: Олегпа Галина Егоровсем, Альăпа Юрий Егоровсем, Маргаритăпа Юрий Егоровсем. Виçĕ çемье – пĕр тăвансем. Илемлĕ юрлаççĕ те, ташлаççĕ те. Артистсенчен те ирттереççĕ тесе хак пачĕç Çурлатрисем. Риммăпа Нина та пĕр тăвансем (аппăшĕпе йăмăкĕ). Римма Павловнан хĕрĕ Светлана та сцена çинчех. Нина Павловнан ывăлĕпе кинĕ Сергейпа Светлана – çĕнĕ мăшăр та хăйсене сцена çинче килĕшŷллĕ тытать. Фольклор ушкăнĕнче чылай вăхăт – 30 çул ытла – Раиса Владимировна Андреева пултарулăхне ŷстерет. Вăл Тойкилтĕри вăтам шкулта ĕçлет. Мăшăрĕ те, Валерий Андреев, 40 çул ытла коллективра. Вĕсем миçе хутчен халăха илемлĕ юрăсем парнелемен пулĕ. Ушкăнра сăмах ăсти те паллă вырăн йышăнать. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен Юлия Николаевна Евстафьева программăна ялан илемлĕ сăмахсемпе килĕшŷллĕн ертсе пырать.

«Асаттесен, асаннесен юррисене эпир юрламасан, камсем юрлĕç-ха?» – теççĕ Мăн Токшиксем. Ламран лама куçса пынă халăх юрри-ташшине, илемне мĕнле манăн-ха? Шăпăрт пурăнсан, нимĕн те тумасан – манатпăр. Тавракурăм та пуян пулмĕ. Çамрăксем патне çак ырă йăла-йĕркен пĕчĕк пайне те пулин çитерсен, хамăра пурăннă пек туйăнать.

Çурлатри ялĕнче пурăнакансем чăнах та килĕштереççĕ хамăр тăрăхри юрăсене, ташăсене. Çамрăксем те пурччĕ, вăтам çулхисем те клуба пуçтарăннăччĕ, ваттисем вара, малти вырăнсене йышăннăскерсем, хушăран куççулĕсене те шăлкаларĕç. Раиса Александровна та, Культура çурчĕн ертŷçи, пире, Мăн Токшиксене, тараватлă кĕтсе илчĕ, ăшшăн ăсатса ячĕ. Çурлатрисем Мăн Токшика концертпа пыма шантарчĕç.

**Н. КОНДУКТОРОВА,**
**«Тăванлăх» фольклор ушкăнĕн илемлĕх ертŷçи.**

**Шалти ĕçсен пайĕнче**

# Асăрханулла пулмалла

Шалти ĕçсен пайĕн лицензи тата ирĕк паракан ĕçсен урăмĕ районти çынсенче тĕрлĕ пăшал пуррине тата ăна мĕнле упранине, унпа еплерех усă курнине тĕрĕслесех тăрать. Анчах пăшал хуçисем, уйрăмах сунарçă пăшалĕсен хуçисем, административлă йĕркене пăсни пĕрре мар тĕл пулать.

Çавăнпа та обществăлла йĕркене çакнашкал 2-3 хут пăснисен пăшалпа 5 çуллăха сыв пуллашма тивет. Хăйсен йăнăшĕсене пула вĕсен пăшала усрама тата пĕрле илсе çŷреме те юрамасть. Сунарçă пăшалĕсен хуçисен кăна мар, ытти тĕрлĕ пăшал пуррине регистрациленисен те ĕç-хĕле саккунпа килĕшŷллĕн туса пымалла.

**Т. ТЕРЕНТЬЕВА,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн лицензи тата ирĕк паракан ĕçсен уйрăмĕн инспекторĕ.**

**Официально**

**Чувашская Республика Моргаушский район**
**Собрание депутатов**
**Юнгинского сельского поселения**
**РЕШЕНИЕ**
**13.03.2009 г. № С-28/2**

с. Юнга

**Об официальных источниках опубликования муниципальных правовых актов Юнгинского сельского поселения**

В соответствии со статьей 17 Федерального закона от 06.10.2003г. N 131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации», статьей Закона Чувашской Республики от 18.10.2004г. N19 «Об организации местного самоуправления в Чувашской Республике» и в целях опубликования муниципальных правовых актов и иной официальной информации Юнгинского сельского поселения Моргаушского района

Собрание депутатов Юнгинского сельского поселения решило:

1. Установить, что официальным опубликованием муниципальных правовых актов Юнгинского сельского поселения считается первая публикация их полного текста в «Вестнике Моргаушского района» или районной газете «Çĕнтерŷ ялавĕ».

2. Определить официальным сайтом для размещения муниципальных правовых актов Юнгинского сельского поселения сайт Юнгинского сельского поселения Моргаушского района ЧР.

3. Опубликовать настоящее решение в районной газете «Çĕнтерŷ ялавĕ».

4. Контроль за исполнением настоящего решения возложить на постоянную комиссию Собрания депутатов Юнгинского сельского поселения по законности, правопорядку.

**Глава Юнгинского сельского поселения**
**С.В. ЕРМАКОВ.**

## Пĕлтерŷсем. Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды земельный участок, для ведения личного подсобного хозяйства, из категории «земли населенных пунктов», с кадастровым номером 21:17:070503:63, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:070503, площадью 3748 кв. м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**20 марта с 9-00 часов до 18-00 часов проводится выставка-продажа обуви из натуральной кожи. Производство городов Казань, Ульяновск, Москва и республики Беларусь. Широкий ассортимент весенней, летней модельной обуви.**

**Куçарса каймалла йывăç пŷрт сутатпăр, 6мх6мх6м. Тел.: 8-905-340-09-70.**

**Продается овес, ячмень, солома, сено в тюках (тюк брикет), мука, бычки. Цена договорная.**
**Куплю: картофель, морковь, лук, свеклу, капусту. Цена договорная. Тел.: 8-960-311-23-87.**

**Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 3-6.**

**Спорт хыпарĕсем**

# Ăмăртрĕç те, канчĕç те

Ильинка ял тăрăхĕнче иртнĕ кунсенче «Хлебороб» хуçалăх ертŷçи пулнă В.А. Храмова асăнса пысăк ăмăрту иртрĕ. Малтан çак ăмăрту вырăнти шайра çеç иртнĕ пулсан, халĕ вара Апчара Мăн Сĕнтĕрти, Вăрманкассинчи, Шашкарти, Тренккăри командăсем те çитрĕç.

Спортăн тĕрлĕ енĕпе иртрĕ ăмăрту. Йĕлтĕрпе чупасси (тĕрлĕ ŷсĕмрисем), йĕлтĕр эстафети, «Атте, анне тата эпĕ» пысăк ăмăрту, мини-футбол, шашкăлла вылясси – çак тата ытти интереслĕ ăмăртусем пулчĕç. Курма пыракансем те, ăмăртăва хутшăнакансем те кунĕпех савăк кăмăлпа çŷрерĕç. Кунта пурне те шŷрпепе сăйларĕç, вĕри чейпе икерчĕ те çитерчĕç. Спонсорсем пулса «Хлебороб» хуçалăх тата В.А. Храмовăн ачисем укçа-тенкĕ тăкакĕсене хăйсем çине илсе, вырăнти культура ĕçченĕсем пулăшнипе çынсене чăн-чăн спортпа кану уявĕ туса пачĕç. Никам та парнесĕр юлмарĕ. Çĕнтерŷçĕсем вара куçса çŷрекен кубока тивĕçрĕç.

Интереслĕ те куракансене тыткăна илнĕ вăйăра вара çĕнтерŷçĕсем çаксем пулчĕç: 1-мĕш вырăнта – «Васильев» ИП команда, 2-мĕш вырăнта – Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх команди, 3-мĕш вырăнта – МСО «Моргаушская». Мала тухнисем дипломсене тивĕçрĕç. Федераци ертŷçи çĕнтерŷçĕ-командăна куçса çŷрекен кубок пачĕ. Уйрăм выляканисене те тĕрлĕ номинацисемпе чысларĕç: «Чи лайăх бомбардир» – Сергей Алексеев («Васильев» ИП), «Чи лайăх тапăнакан» – Дмитрий Яковлев (Ильич яч. хис.), «Чи лайăх хŷтĕлекен» – Александр Макаров (Ильич яч. хис.), «Чи лайăх вратарь» – Владимир Ефимов («Васильев» ИП). Вĕсем грамотăсемпе пĕрле пылак парнесене те тивĕçрĕç.

**Хамăр инф.**

# Хоккейла вылярĕç

Мартăн 7-мĕшĕнче ĕçлекен коллективсем хушшинче «Сывлăх» ФСК пăрĕ çинче хоккейла выляссипе район ăмăртăвĕ иртрĕ. Вăл хоккейла выляканисене тата çак вăйăна кăмăллакансене кăçалхипе иккĕмĕш хут çеç пуçтарчĕ-ха.

Пуçтарăннисене депутатсен район Пухăвĕн депутачĕ, Муркаш районĕнчи хоккей федерацийĕн ертŷçи Валерий Иванович Кожанов саламласа хоккей вăййине районта çŷллĕрех шая ŷстерсе пыма ăнăçусем сунчĕ.

# Волейбол ăмăртăвĕ иртет

Мартăн 21-мĕшĕнче Муркашри Спорт çуртĕнче ОМОН кĕрешŷçи Г.Е. Кудьков ятне асăнса тата унăн кубокĕпе парнисене çĕнсе илессишĕн волейболла выляссипе республика ăмăртăвĕ пулать. Унта шкул ачисен тата ĕçлекен коллективсен командисене чĕнеççĕ. Ăмăрту 11 сехетре пуçланать. Командăра 9 выляканпа пĕр представитель пулни çинчен ăмăрту кунĕнче заявка тăратмалла.

# Спартакиада малалла пырать

Çав кунах, мартăн 21-мĕшĕнче, Муркаш шкулĕн тирĕнче ĕç коллективĕсен спартакиади майĕпе винтовкăран тĕл пересcипе ăмăрту иртет. 9 сехет тĕлне 3 арçынпа 2 хĕрарăмран тăракан командăсене ăмăртăва йыхравлаççĕ.

Чуманкассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен С.В. Алексеевăн ашшĕ
**Валериан Ананьевич**
**МИКАШКИН**
вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Коллектив Моргаушского почтамта выражает искреннее соболезнование родным и близким по поводу безвременной кончины бывшего начальника Моргаушского почтамта
**МИКАШКИНА**
**Валериана Ананьевича.**

«Çĕнтерŷ ялавĕ» хаçат редакцийĕ пирĕн ялкорăн, халăх ăсчахĕн Н.П. Пантелеймоновăн мăшăрĕ
**Ольга Семеновна**
вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ
**Агриппина Артемьевна**
**АРТЕМЬЕВА**
ĕçпе вăрçă ветеранĕ, пенсионерка йывăр чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Моргаушская районная газета «Çĕнтерŷ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерŷ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Шапошников В.Л.**
**Номер подписан 17.03.2009 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3860.**

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерŷ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.